27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1944
НОЯБРЬ
5
ВЫРСАРНИКУН
219(6714) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсене пирĕн Тăван çĕршывран сирпĕтсе кăларчĕ. Сывă пултăр пирĕн ирĕклĕ Совет Çĕршывĕ! Сывă пултăр паттăр Хĕрлĕ Çар — ирĕке кăларакан Çар!

(Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 27 çул çитнĕ тĕле ВКП(б) Центральный Комитечĕ чĕнсе каланисенчен).

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем паян, ноябрĕн 4-мĕшĕнче, Венгри территорийĕ çинчи СОЛЬНОК хулипе пысăк чугун çул узелне — тăшманăн Тисса шывĕ çинчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне штурмласа туртса илнĕ.

СОЛЬНОК хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ШУМИЛОВ генерал-полковникăн, ШЛЕМИН генерал-лейтенантăн, САФИУЛИН генерал-лейтенантăн, АЛЕХИН генерал-майорăн, КОЛЧУК генерал-майорăн, РУБАНЮК генерал-лейтенантăн, ПРЕОБРАЖЕНСКИЙ генерал-майорăн, ФЕДОРОВСКИЙ генерал-майорăн, ЛИЛЕНКОВ генерал-майорăн, ВАСИЛЕВСКИЙ полковникăн, КОВТУН-СТАНКЕВИЧ полковникăн, ДУНАЕВ полковникăн, КАРАМЫШЕВ генерал-майорăн, БАЛДЫНОВ полковникăн, МАРГЕЛОВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ФОМИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ПЕТРОВĂН, артиллери генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕНКĂН, артиллери генерал-майорĕн ГУСАРОВĂН, артиллери генерал-майорĕн БОБРОВНИКОВĂН артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн КУРКИНĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн БОГДАНОВĂН, РУМЯНЦЕВ полковникăн, БРИЖИНЕВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ГОРЮНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн СТЕПИЧЕВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ПОДГОРНЫЙĂН, авиаци генерал-майорĕн КАМАНИНĂН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ЦИРЛИНĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ПЛЯСКИНĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ИГНАТОВĂН саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ЛЕОНОВĂН, БОРИСЕНКО полковникăн, ЕГОРОВ полковникăн, КАРПОВ полковникăн связисчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, СОЛЬНОК хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, ноябрĕн 4-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕрçирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, УКРАИНАРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, СОЛЬНОК хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, СОЛЬНОК хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕ.

Аслă уяв умĕн

Пирĕн çĕршывра империалистсен влаçне сирпĕтсе антарса, халăхсене ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç туса панă Октябрьти Социализмлă Аслă Революци тепĕр кунран çирĕм çичĕ çул тултарать. Совет стройĕ пурăнса ирттернĕ çак çирĕм çиччĕмĕш çул пирĕн халăхăн историйĕнче чи чаплă çулсенчен пĕри пулса тăрать. Кăçалхи Октябрь уявне çĕршыври халăхсем фронтра та, тылра та аслă çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илеççĕ.

Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсене хамăр çĕр çинчен хурçă шăпăрпа шăлса ыватрĕ. Ĕмĕр-ĕмĕр тĕксĕмленми çуталса выртать совет çарĕсен аслă çĕнтерÿ çулĕ. Иртнĕ çулталăк хушшинче Хĕрлĕ Çар Днепртан пуçласа Висла шывĕ патне çитиччен, Крымран пуçласа — Карпат тăвĕсем урлă — Венгри столици Будапешт патне çитиччен утса тухрĕ. Иртнĕ хĕл варринче пирĕн паттăр воинсем Октябрьти революцин вучахне — аслă Ленин хулине хупăрласа тăнă нимĕçсен «хурçă ункине» çапса аркатрĕç те фашистла йыткĕтĕвĕсене, ирсĕр тислĕке сирсе ыватнă пек, аяккалла хирсе пăрахрĕç. Балтика тăрăхне тасатса пырса, пирĕн çарсем кунта кĕçех ак юлашки нимĕçе хурçă штык вĕçне тăрăнтарса тинĕселле вăркăнтараççĕ.

Гитлеровецсене умлăн-хыçлăн архатмаллах пыра-пыра çапса, вĕсен нумай пинлĕ ушкăнĕсене нумай çĕрте савăра-савăра илсе, пĕтере-пĕтере тăкса, пирĕн çарсем хамăр государствăн чиккисем леш енче тăхăр çĕршывăн территорийĕ çине кĕчĕç.

Кăçалхи октябрĕн 23-мĕшĕ пирĕн çĕршыври халăхсемшĕн ĕмĕр манмалла мар кун пулса тăрать. Çав кун каçхине пирĕн хĕçпăшаллă вăйсен Верховный Главнокомандующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ совет çарĕсем Хĕвелтухăç Прусси территорийĕ çине кĕни çинчен пĕлтерчĕ. Çапла, совет халăхĕн аслă та паттăр çарĕ ылханлă Германи çĕрĕ çине çĕмĕрсе кĕчĕ. Чĕтре, фашистла Германи! Пирĕн чаплă хуласемпе чечекленекен ялсене аркатса пĕтернишĕн, нимĕн айăпсăр совет хĕрарăмĕсемпе ачисене, ватă çынсене куççуль тăктарнишĕн, мăшкăлланишĕн, пусмăрланишĕн, асаплантарнишĕн, вĕлернишĕн, — мĕнпур ирсĕр те тискер ĕçсемшĕн фашистла урнă йытăсене хаяррăн тавăрас кун çитрĕ! Хĕрлĕ Çар халĕ, пĕтĕм совет халăхĕ, мĕнпур малта пыракан этемлĕх ыйтнине тивĕçтерсе, фашистла тискер кайăксен йăвине пĕр хĕрхенмесĕр тустарать, малтан малалла куçса пырать.

Пусмăрти халăхсене ирĕке кăлармалли хăйĕн аслă тивĕçне пурнăçа кĕртсе пырса, Хĕрлĕ Çар Польшăна, Югославие, Чехословакие, Норвегин çурçĕр-хĕвелтухăç районĕсене нимĕç захватчикĕсенчен тасатать.

Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапнипе фашистла Германин тарçисем пулнă Румыни, Болгари, Финлянди Гитлер ушкăнĕнчен тухса ÿкрĕç кăна мар, вĕсем хăйсен хĕçпăшалне нимĕçсене хирĕç çавăрчĕç. Часах Германин юлашки тарçи те — Венгри те фашистла блокран тухса ÿкĕ. Ун çĕрĕ çинче халĕ совет çарĕсем ăнăçлăн малалла тапăнса пыраççĕ.

Совет çарĕсен çĕнтерĕвĕсем, чăннипех те, истори ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлакан улăпла çĕнтерÿсем пулса тăраççĕ. Вĕсене аслă çар, аслă халăх кăна тума пултарнă.

Çав çĕнтерÿсене пула Совет Союзĕн тĕнчери халăхсем умĕнчи авторитечĕпе чапĕ татах та ытларах ÿсрĕ. Хĕрлĕ Çарăн аслă çĕнтерĕвĕсене пула, пирĕн союзниксем — Англипе Америка малтан Нормандире, унтан Кăнтăр Францире десант çарĕсем антарчĕç те халĕ фашистла Германи çине хĕвеланăçĕнчен те, кăнтăртан та хăватлăн тапăнса пыраççĕ. Фашистла тискер кайăкăн йăвине пур енчен те хупăрласа илнĕ хурçă ункă хĕсĕнсех пырать. Нумай халăхсен юнĕпе вараланса пĕтнĕ фашистла пуçлăхсем тĕнче хĕррине тарса çăлăнма пăхсан, вĕсене унта та шыраса тупăпăр, терĕç аслă союзниксем иртнĕ çул пулса иртнĕ Тегеранри конференцире. Союзлă державăсем пĕр-пĕрин умĕнче тупа туса каланă çак сăмах пурнăçа кĕрет. Халĕ кĕрешÿри аслă туссем — Совет Союзĕпе Англи тата Америка хушшинчи союз нихăçанхи пек мар пĕтĕçсе çирĕпленчĕ.

Хĕрлĕ Çар тунă аслă çĕнтерÿсем пĕтĕм совет халăхĕн хастарлăхĕпе паттăрлăхĕ çинче, Хĕрлĕ Çарăн вăрçăри геройлăхĕпе мастерлăхĕ çинче, пирĕн чаплă полководецăн Сталин юлташăн аслă та ăслă шухăшĕсем çинче никĕсленсе тăраççĕ.

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 26 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн докладĕнче пирĕн государство вăйĕпе хăвачĕн çăлкуçĕсене кăтартса пачĕ. Пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ, совет халăхне Ленин—Сталин партийĕ ертсе, çул кăтартса пыни, пирĕн çĕршывра совет стройĕ çĕнтерсе ÿссе çирĕпленни, — çаксем пулса тăраççĕ ĕнтĕ пирĕн Совет Союзĕн вăйĕпе хăвачĕн çăлкуçĕсем. Çав çăлкуçĕсенчен Хĕрлĕ Çар — фронтра аслă çĕнтерÿсем тума, совет халăхĕ — тылра геройла ĕçлеме вăй илсе тăраççĕ.

Аслă çулпуç тылри совет çыннисен ĕçне пысăка хурса хакларĕ. «Çирĕппĕнех çапла калама пулать, — терĕ Сталин юлташ:—совет çыннисем тылра вăя шеллемесĕр ĕçлени, Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе пĕрлех, Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ çĕрте халăх халиччен нихăçан пулман паттăр ĕç тунине кăтартса, историе кĕрсе юлать».

Сталинăн генилле планĕсем тăрăх туса çитĕнтернĕ социализмлă индустри паттăр Хĕрлĕ Çара чи лайăх хĕçпăшал, чи лайăх çар техники парса тăрать. Пирĕн совет самолечĕсемпе танкĕсем нимĕçсеннинчен хăватлăрах та йышлăрах, совет артиллерийĕ пек хăватли вара тĕнчере урăх пĕр çарăн та çук.

Пирĕн колхозлă ял тăван çĕршывпа фронта тырпулпа ытти тĕрлĕ апат-çимĕç, промышленноçа — чĕртавар ытлăн-çитлĕн парса тăрать.

Сталин юлташ пăхса çитĕнтернĕ совет интеллигенцийĕ пирĕн çĕршывăн оборонишĕн чĕререн парăнса ĕçлет, Хĕрлĕ Çарăн хĕçпăшалне, производство техникипе организацине тăтăшах лайăхлатса пырать. Вăл промышленноçпа ялхуçалăхне малалла ÿстерсе пырас ĕçре рабочисемпе колхозниксене пулăшать, вăрçă кунĕсенче те совет наукипе культурине малалла аталантарса пырать.

Пирĕн çĕршыври халăхсем нимĕнле йывăрлăх умĕнче те алла усса тăмаççĕ. Фашистла ирсĕрсенчен тасатнă совет çĕрĕ çинче хуçалăхпа пурнăçа çĕнĕрен юсаса ура çине тăратас ĕç хăватлăн сарăлса кайрĕ. Донбасра çĕнĕрен-çĕнĕ домнăсемпе мартен кăмакисем чĕрĕлеççĕ. Украинăри, Белоруссири, Литвари, Латвири, Эстонири заводсемпе фабрикăсем строя кĕрсе пыраççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн хăватне татах та ытларах ÿстерме пулăшаççĕ.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци ĕмĕрхи пусмăртан ирĕке кăларнă чăваш халăхĕ те, Совет Союзĕнчи пĕтĕм тăванла халăхсемпе пĕрле, геройла кĕрешет, хастаррăн ĕçлет. Чăваш халăхĕн фронтри ывăлĕсем хăйсен Ленин орденлĕ тăван республикин чысне çÿлте тытаççĕ, вĕсем Днепр, Днестр, Прут, Дунай шывĕсемпе Карпат тăвĕсем урлă каçнă çĕрте, Хĕвелтухăç Пруссие штурмланă çĕрте арăсланcем пек, ăмăрткайăксем пек çапăçнă, çапăçаççĕ те. Ирсĕр тăшманпа çапăçнă çĕрте паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн чăваш халăхĕн ывăлĕсенчен 10.000 çынна ытла Правительство орденсемпе медальсем парса наградăланă, 20 çынна ытла Совет Союз Геройĕн чаплă ятне панă. Отечественнăй аслă вăрçă паттăрĕсен ретĕнче мухтавлă Геройсен — Винокуров, Орлов, Васильев, Ефимов, Лаптев, Габайдулин, Кочетов, Салихов, генерал-майор Петров, Яшин, Ахаев, Сапожников, Поляков, Иванов, Коновалов, Тухланов тата ытти юлташсен ячĕсем ĕмĕр манми ялкăшса тăраççĕ.

Тылра та пирĕн чăваш халăхĕ вăя хĕрхенмесĕр, хастаррăн ĕçлет, фронтпа çĕршыва тырпул, аш-какай, сĕт-çу, промышленноçа чĕртавар ытлăн-çитлĕн парать.

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, хăйсен уйхирĕсенче кăçал тухăçлă тырпул туса илчĕç, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерчĕç, государствăна срокчен пилĕк кун малтан, октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне, тырпул парса татрĕç. Республикăра Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту уйрăмах хăватлăн сарăлса кайрĕ. Çав ăмăртăва хутшăнса, республикăри колхозсем Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе 500.000 пăт тырă пачĕç, халĕ тата çав фонда 12 пин тонна çĕрулмипе пахча-çимĕç парса татассишĕн кĕрешеççĕ. Анчах халĕ çитĕнÿсемпе лăпланса ларма вăхăт мар. Килес çулхи вăйлă тырпулшăн, çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитессишĕн, хăшпĕр районсем кая юлса пынине пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешмелле. Уйрăмах пирĕн колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк çитменлĕхсене пĕтерессишĕн нумай вăй хурса ĕçлес пулать.

Иртнĕ çулталăкра пирĕн республикăри промышленность та, пĕтĕмĕшпе илсен, начар мар ĕçлерĕ. Чылай предприятисем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура премисем илме тивĕçлĕ пулчĕç. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, Якунин тата Челноков юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен заводсем тата ытти те октябрь уйăхĕнчи производство программисене тултарчĕç. Анчах промышленноçра пирĕн туса çитермелли ĕçсем чылай-ха. Наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çар, пирĕн Тăван çĕршыв промышленность умне çĕнĕ задачăсем лартаççĕ, рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен çав задачăсене чыслăн пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле.

Халĕ, Отечественнăй вăрçăн татăклă таппăхĕнче, пĕр минутăлăха та лăпланса ларни пулмалла мар. Хăйĕн йăвине шуса кĕнĕ фашистла ирсĕр тискер кайăк урсах хирĕç тăрать. Ана пуçĕпех çапса вĕлерес тесен, пирĕн хамăрăн вăйсене икĕ хут, виçĕ хут ытларах ÿстерсе кĕрешмелле, ĕçлемелле.

Çапла чĕнет пире Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ, çапла чĕнет пире хамăрăн юратнă çулпуç Сталин юлташ!

Ленин ялавĕпе, Сталин ертсе пынипе гитлерла Германие пĕтĕмĕшпех аркатса тăкма, пирĕн тĕрĕслĕхлĕ ĕçе пĕтĕмпех çĕнтерсе кăларма — малалла!

Совет Информаци Бюровĕнчен

НОЯБРĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем Хĕвелтухăç Пруссире ГОЛЬДАП хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăртарахра тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă, нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кÿнĕ.

БУДАПЕШТ хули енче ТИССА шывĕпе ДУНАЙ шывĕ хушшинче пирĕн çарсем, наступление вăйлатса пырса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра — ТОСЕГ, ЭРКЕНЬ, ДИОН, АЛЬШОДАБАШ, УПХАРТЬЯН, ШАРИ, АЛШОНЕМЕДЬ, БУДЬИ, САЛКСЕНТМАРТОН, ДУНАВЕЧЕ ятлă пысăк ялсем тата ТОСЕГ, МИКЕБУДА, ЭРКЕНЬ, АЛЬШОДАБАШ, ИНАЧ-КАКУЧ, ДУНАВЕЧЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 38 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 11 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Хĕвелтухăç Пруссире Гольдап хули районĕнче тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем пирĕн позицисене атакăланă. Пĕр вăхăтрах çурçĕр енчен те кăнтăр енчен те пырса çапса, нимĕçсем совет чăсĕсене кĕтмен çĕртен хĕссе лартасшăн пулнă. Хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Пирĕн пехотинецсемпе артиллеристсем гитлеровецсене пур тĕслĕ хĕçпăшалпа та пеме тытăннă. Нимĕçсен вара ирĕксĕрех каялла пăрахса кайма лекнĕ. Тăшман часах çĕнĕ атакăсем пуçласа янă. Пĕр участокра нимĕç танкĕсемпе пехотин пĕр ушкăнĕ совет çарĕсем тăракан вырăна савăлланса кĕрсе кайнă. Артиллери тата гварди миномечĕсем хăватлăн персе тăшманăн çав ушкăнне пуçĕпех пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен виллисем нумай выртса юлнă, нимĕçсен çунса кайнă е çĕмĕрсе тăкнă темиçе танкĕ тăрса юлнă. Тепĕр участокра нимĕçсен танкĕсемпе автоматчикĕсем пирĕн позицисем патне сывăхарнă. Бурьда офицер ертсе пыракан гвардеецсен артиллери батарейи пеме пуçланă та тăшманăн виçĕ танкне çунтарса янă. Нимĕç автоматчикĕсене ванакан снарядсемпе персе, йывăр çухатусем кÿнĕ.

* * *

Будапешт хули енче, Тисса шывĕпе Дунай шывĕ хушшинче, пирĕн çарсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Нимĕçсемпе венгерсем, хăйсен салтакĕсемпе техники темĕн чухлех пĕтесçĕ пулин те, совет çарĕсене Будапешт хулине каякан çулсем çинче чарса лартма хăтланаççĕ, çапăçăва хăйсен алă айĕнчи резервĕсене — охранăй чăсĕсене, тылри гарнизонсене тата тĕрлĕ командăсене кĕрте-кĕрте яраççĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах тăшман хăйĕн пехотипе артиллерине тата танкĕсене фронтăн ытти участокĕсенчен васкасах Будапешт хули районне куçарса каять. Анчах темле тăрăшсан та, тăшман пирĕн çарсем малалла пынине чарма пултарайман. Пĕр соединени чăсĕсем, Кечкемет хулипе Будапешт хули хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх наступлени туса пырса хаяр çапăçура тăшмана хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та 30 километр таран малалла кайнă. Алшонемедь ялне туртса илнĕ. Ку ял Будапешт хулинчен 15 километртра кăна ларать. Пирĕн ытти чăсĕсем, Дунай шывĕн хĕвелтухăç хĕррипе наступлени туса пырса, вăйлă çапăçусем хыççăн халăх пурăнакан чылай пунктсене туртса илнĕ. Совет пехотипе танкĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман çул çинче хĕçпăшал тата çар пурлăхĕ нумай пăрахса хăварать.

* * *

Пултуск хулинчен кăнтăртарахра нимĕç пехотин икĕ батальонĕ, çапăçăва кĕрсе кайса, разведка тума пуçланă. Пирĕн малти подразделенисем тăшманăн умлăн-хыçлăн тунă тăватă атакине сирсе янă. Каç пулса килнĕ тĕлелле совет боецĕсем тăшмана хăйсем пырса çапнă та каялла хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 340 виллине шута илнĕ. Нимĕçсен 4 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флотĕнче тăракан пĕр самолет экипажĕ, Барзов подполковник командир пулса ертсе пынипе, Балтика тинĕсĕнче, торпеда пăрахса, тăшманăн 3.000 тонна таякан транспортне шыва путарнă.

* * *

Балтика тăрăхĕнчи 2-мĕш фронтра нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен ушкăнĕ Хĕрлĕ Çар енне куçнă. Çавсенчен пĕри нимĕçсен 21-мĕш хирти авиаци дивизийĕнче тăнă обер-лейтенант Вольфганг Н. çапла калса кăтартнă: «Офицерсемпе салтаксем нимĕçсен çарĕн çурçĕрти ушкăнĕ Германирен татăлса юлнине тата вăл тылпа тип çĕр тăрăх çыхăну тытма пултарайманнине пурте лайăх пĕлеççĕ. Салтаксемпе офицерсем нумайĕшĕ çапла шутлаççĕ: Балтика тăрăхĕнче тăрса юлнă нимĕç çарĕсене пурне те Крымри нимĕç дивизийĕсене пĕтерсе тăкнă пекех пĕтерсе тăкаççĕ, теççĕ. Командовани ĕç чăннипе мĕнле тăнине салтаксенчен пытарма тăрăшать. Нумаях пулмасть арми командующийĕ вăрттăн приказ салатнă. Приказра çапла каланă: «Пирĕн ĕçсем мĕншĕн капла пулса тăни çинчен шухăшлама тата малалла мĕн пуласси çинчен пĕлме те тăрăшмалла мар. Пире кирли çакă пулса тăрать: халĕ йышăнса тăракан позицисене 1945 çулхи май уйăхĕччен аларан ямалла мар». Эпĕ нимĕç çарĕсем çитес çуркуннеччен чăтса тăма пултарас çуккине, пĕтсе ларассинчен хăтălма çуккине лайăх пĕлсе çитрĕм».

Нимĕçсен 390-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Алоиз Штольц çапла каласа кăтартнă: «Октябрĕн 21-мĕшĕнче Харме подполковник пире полка панă приказа вуласа пачĕ. Приказра çапла хушнă: кашни отделени командирĕ хăйсен позицийĕсене пăрахса хăваракан салтаксене çавăнтах персе пăрахма тивĕçлĕ. Отделени командирĕ çак приказа итлемесен, ăна рота командирĕн çавăнтах персе пăрахмалла. Батальон командирĕсем салтаксене чарман рота командирĕсене персе пăрахма тивĕçлĕ. Хăйсен подразделенийĕсем йышăнса тăракан вырăнтан аяккарах тытса чарнă салтаксене çавăнтах полк штабне илсе каймалла. Унта кашни 5-мĕш салтака персе пăрахаççĕ. Вара çакăн хыççăн Харме малтанлăха персе пăрахнă салтаксен хушамачĕсене пĕлтерчĕ. Вăл ушкăнра 20 салтакчĕ».

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Ялсенчи врач участокĕсен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ, ялсенчи врач участокĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи III-мĕш кварталти итогĕсене пăхса тухнă.

Виççĕмĕш кварталта Елчĕкри врач участокĕ (главнăй врачĕ Комиссарова юлташ) мала тухнă тесе йышăннă тата ăна Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă.

Совнарком çавăн пекех Пăрачкав районĕнчи Сиявăри тата Канаш районĕнчи Сиккассинчи больницăсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Вырăнти топливо промышленность Управленийĕн предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ вырăнти топливо промышленность Управленийĕн предприятийĕсен вырăнти топливо хатĕрлес тата турттарса кăларас тĕлĕшпе пынă социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи октябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Октябрь уйăхĕнче ăмăртура Шупашкар, Улатăр, Елчĕк тата Сĕнтĕрвăрри леспромхозĕсем мала тухнă тесе йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне Шупашкар леспромхозĕн аллинчех хăвармалла тунă (леспромхоз директорĕ Кобяков юлташ, Горсовет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) тата çав леспромхоза социализмлă ăмăртура уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене премилеме 20 пин тенкĕлĕх награда пама йышăннă.

Совнарком 15 пин тенкĕлĕх пĕррелĕмĕш премие Улатăр леспромхозне (директорĕ Горданов юлташ, Горсовет исполкомĕн председателĕ Вислобоков юлташ), 10-шар пин тенкĕлĕх иккĕмĕш премисене пĕрне Елчĕк леспромхозне (директорĕ Тимофеев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов юлташ), тепĕрне Сĕнтĕрвăрри леспромхозне (директорĕ Смирнов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин юлташ) пама йышăннă.

Совнарком тата вутă хатĕрлес тата турттарса кăларас тĕлĕшпе октябрь уйăхĕнче Вăрнар, Первомайски, Советски, Кÿкеç леспромхозĕсем лайăх ĕçленине палăртнă.

КОЛХОЗСЕМ ПĔР-ПĔРНЕ ПУЛĂШНИ

Нимĕçсем Калуга облаçĕнчи Козельск районĕнчи Пабуж ялне пĕтĕмпех çунтарса янă. Чĕрĕ юлнă çынсем çурт-йĕрсĕр тăрса юлнă, вара кÿршĕри ялсене саланнă. Çунтарса янă çуртсем тата обществăллă лайăх çурт-хуралтăсем вырăнĕнче çумкурăксем ÿссе ларнă.

Пабуж ялне çавăн пек пĕтерсе лартни пĕтĕм округри халăха хумхантарнă. Артиллери сасси хĕвеланăçнелле кайса çухалсанах, Пабуж ялĕ ларнă вырăна пĕренесемпе хăмасем тиенĕ лавсем пыма пуçланă. Вĕсем хыççăн платниксем, чул çурт тăваканcем пынă. Кÿршĕри колхозсем çапла Пабуж колхозне пулăшма пуçланă. Икĕ уйăх хушшинче вĕсем 80 çурт ытла лартса панă.

Пушă юлнă хирсем чĕрĕлме пуçланă. Пабуж колхозникĕсем çуркунне хире тырă акма тухнă. Кашни колхознике пĕрер пăру панă. Обществăллă фермăсем тунă. Кÿршĕри колхозниксем шкул валли илемлĕ çĕнĕ çурт туса лартнă. Ачасем вĕренме пуçланă.

Колхоз йĕркине пула, Пабуж ялĕ çĕнĕрен пурăнма пуçланă. (ТАСС).

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ИНВАЛИЧĔСЕМ ВАЛЛИ САНАТОРИСЕМПЕ КАНУ ÇУРЧĔСЕМ

Россия Федерацийĕн 15 облаçĕпе крайĕнче тата автономиллĕ республикисенче Хĕрлĕ Çарăн инвалид пулнă салтакĕсемпе офицерĕсем валли кану çурчĕсем уçнă. Отечественнăй вăрçăра çапăçнă çынсем унта 1—2 уйăх хушши канаççĕ. Кашни кану çурчĕн подсобнăй хуçалăх пур, унта шултăра тата вак выльăх фермисем, кайăк-кĕшĕк фермисем, утарсем пур. Çитес вăхатра РСФСР Социальнăй обеспечени Халăх Комиссарначĕ тата икĕ кану çурчĕ уçать, пĕрне — Пятигорскра, тепĕрне — Эссентуки хулинче. Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен санаторийĕсен хисепĕ те ÿсет. Ноябрь уйăхĕнче Ялтăри санатори, çак çул вĕçĕнче Кисловодскри санатори ĕçлеме тытăнаççĕ. (ТАСС).

Фронтовиксен çемьисене пулăшни

ШАХАСАН. Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе районри чылай колхозсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Нумай фронтовиксен арăмĕсене, ачисене счетовод, бригадир, кладовщик, весовщик пулма вĕрентсе ĕçе вырнаçтарнă, нумайĕшĕ выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлеççĕ.

Фронтран аманса килнĕ инвалидсем колхозсенче учетчиксемпе счетоводсем пулса 23 çын, бригадирсем пулса 36 çын, ферма заведующийĕсемпе аслă конюхсем пулса 24 çын, колхоз тата ялсовет председателĕсем пулса 37 çын ĕçлеççĕ.

Фронтовиксен ачисене пулăшма 98 килограмм çăм пухнă, 37 мăшăр чăлха тата алшиш çыхса панă. Нумай колхозсем фронтовиксен çемьисен хваттерĕсене, пÿрт-çуртсене юсаса, вутă турттарса параççĕ. 10 колхозра фронтовиксен çемьисем валли 1.644 кубометр вутă касса хатĕрленĕ. «Прожектор» колхоз (председателĕ Иванов юлташ) 500 кубометр, Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Афанасьев) 150 кубометр, «Çамрăк колхозник» колхоз (председателĕ Сильвестров) 200 кубометр вутă хатĕрленĕ. «Гвардеец» колхоз (председателĕ Тихонов) фронтовиксен çемьисен хваттерĕсене юсама кантăк илсе панă, 50 хуçалăхăн çурт тăррисене виттернĕ. Чкалов тата Калинин ячĕсемпе тăракан колхозсем Журавлева тата Пигасова колхозницăсене пÿрт лартса параççĕ. Паянхи куна 11 колхозра 29 кăмака юсаса панă. Ильич ячĕпе тăракан колхоз фронтовик çемьине Мария Тимофеевăна пÿрт юсаса панă. «Свет» колхозра Е. Алексеева, М. Васильева, А. Игнатьева колхозницăсен кăмакисене юсаса панă, 93 хуçалăхра пÿрт тата ытти çурт тăррисене юсанă.

Фронтовиксен çемьисене пулăшасси партипе комсомол организацийĕсен пуçарăвĕнчен нумай килет. Çавăнпа та ку ĕçе куллен туса пымалла. Фронтовиксен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене куллен пулăшса пырса, вĕсене ĕçлеме тата пурăнма лайăх условисем туса памалла.

А. АНТОНОВ,
ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕхе витесенче тытса усрама тĕплĕн хатĕрленмелле

Кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне тултараймарĕç. Ку енĕпе плана Çĕрпў, Чурачăк, Шупашкар, Вăрмар тата Куславкка районĕсем кăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Мăйракаллă шултăра выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес енĕпе Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Вăрнар, Сĕнтĕр районĕсем; сыснасем ĕрчетес енĕпе—Улатăр, Кувакино, Шăхасан, Етĕрне, Канаш, Йĕпреç районĕсем; сурăхсемпе качакасем ĕрчетес енĕпе — Елчĕк тата Тăвай районĕсем уйрăмах япăх ĕçлеççĕ.

Çав районсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе партипе совет тата çĕрĕç органĕсем çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Çавна пула кăçалхи çуркунне асăннă районсенче выльăхсем чылай вилчĕç. Выльăх-чĕрлĕх йышĕ чакнине районсен руководителĕсем концентратсем çитмеççĕ тесе ăнлантарса пама пăхаççĕ. Анчах тĕп сăлтавĕ — унта мар, уйрăм колхозсемпе районсенче çав ĕçе япăхтарнинче, выльăх-чĕрлĕхе начар пăхнинче.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри япăх тĕслĕхсенчен пĕри вăл — чылай районсенче ама выльăхсем чакни пулса тăрать. Выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлăн ĕрчетсе пырас ĕçре ама выльăхсем пысăк вырăн йышăнса тăнине хăшпĕр районсен руководителĕсем ăнланса илмен-ха. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле тăнине хакланă чухне час-часах пирĕн пĕтĕм выльăхсен хисепне илсе кăтартаççĕ. Пĕтĕмĕшле тĕслĕхсем плана мĕн чухлĕ тултарнине палăртса тăраççĕ пулин те, вĕсем çак ĕçĕн пахалăхне тĕрĕс хаклама май памаççĕ. Государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне эпир çулран çул тултарса пырас тетпĕр пулсан, пирĕн пуринчен малтан ама выльăхсене упраса хăварассишĕн, вĕсен йышне ўстерсе пырассишĕн тăрăшмалла.

Район руководителĕсен çак ĕçе тўрремĕнех хăйсен хутшăнас пулать, ама выльăхсене вырăнсăр салатса пĕтерме памалла мар. Чуптару кампани вăхăтĕнче, çавăн пекех пăрулас е хăмлас вăхăтра ама выльăхсене лайăх условисем туса памалла. Ама выльăхсен хисепне чакарса пыракан колхоз руководителĕсене ответ тыттармалла. Çак енĕпе колхозниксемпе колхоз руководителĕсем хушшинче куллен массăллă-политикăллă, ăнлантарулă ĕç туса пырас пулать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—çамрăк выльăхсем вилни пулса тăрать. 1944 çулхи тăхăр уйăх хушшинче пирĕн тихасем 12,5 процент, пăрусем 25,6 процент, сыснасем 20.8 процент, путексем 42,1 процент вилсе пĕтнĕ. Уйрăм районсенче çамрăк выльăхсем татах та ытларах вилнĕ. Сăмахран, Элĕк, Йĕпреç, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Советски, Чкаловски тата Шăмăршă районĕсенче пăрусем 35—45 процент вилнĕ.

Çакă вăл, пĕр енчен, выльăхсене хупса усрамалли витесене хĕле çителĕксĕр хатĕрлесе çитерниччен, ама выльăхсене, вĕсем пĕтĕ чухне тата пăруланиипе хăмлани чухне, япăх пăхнинчен, тепĕр енчен тата, уйрăм колхозсмпе районсенче выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшине шанчăксăр та тўрĕ кăмăллă мар çынсем лекниинчен килнĕ.

Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ районсенчи партипе совет организацийĕсен руководителĕсене çакăн пирки пĕр хутчен мар асăрхаттарнă. Тўрех калас пулать: выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтупа районсен руководителĕсем хăйсем тимлĕн ĕçленĕ çĕрте çўлерехре кăтартнă фактсем çук.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе пирĕн тĕпренех тўрлетес пулать, выльăхсене хĕл каçарма большевикла хатĕрленсе çитес пулать, çавăн пекех ама выльăхсен йышне ўстерес тата çамрăк выльăхсене упраса хăварас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне пирĕн, колхозниксемпе единоличник хуçалăхĕсенчен сутăн илнипе мар, пуринчен малтан, колхоз фермисенчи выльăхсен шутĕнчен ўстерсе пымалла.

Пирĕн республикăра вак-тĕвек выльăх-чĕрлĕхсем, кайăк-кĕшĕксем ĕрчетме пысăк майсем пур. Çав йышши выльăх-чĕрлĕх вăрçă вăхăтĕнче хамăр çĕршывăн апат-çимĕçпе чĕртавар ресурсĕсене ўстерсе пырас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах ку ĕç çине колхозсен, çĕрĕçпе совет органĕсен руководителĕсем халиччен кирлĕ пек çавăрăнса пăхман-ха. Пирĕн республикăри нумай колхозсемпе районсенче кроликсем, хурт-хăмăр, уйрăмăнах хуркăвакал ĕрчетес ĕç япăх пулса пынине çакăнпа кăна ăнлантарса пама пулать ĕнтĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре апат-çимĕç тĕп вырăн йышăнса тăрать. Кăçалхи çул республикăри нумай колхозсем выльăх апачĕ вăхăтра та çителĕклĕ хатĕрлесе хучĕç. Малта пыракан колхозсен председателĕсем, выльăхсене хĕлле тăрантарма фермăсем патне утă-улăм тата концентратсем турттарса хурса, вĕсене ферма заведующийĕсен аллине актсем тăрăх пачĕç. Çакă вăл питех те тĕрĕс. Пур колхозсенче те шултăра апат-çимĕçе халех фермăсем патне турттарса хумалла, хĕллехи çил-тăмансемпе çуркуннехи шыв-шур вăхăтĕнче тăрантарма выльăх апачĕн никам тĕкĕнмелле мар запасне туса хумалла. Выльăх апатне типтерлĕн те перекетлĕн тыткаласси çине тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Кашни колхозрах выльăхсене витере хупса усранă вăхăтра тăрантарма уйăхсерен мĕн чухлĕ апат расходламалли нормăсемпе плансем туса хуни кирлĕ. Çак ĕçре колхозсене çĕрĕç органĕсен работникĕсемпе специалисчĕсем пулăшма тивĕçлĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре часах хĕрўллĕ тапхăр çитет. Выльăхсем пăрулама, пăрамлама, çурăлама пуçлаççĕ. Çав тапхăра пирĕн тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илес пулать. Çамрăк выльăхсене хупса усрамалли çуртсене малтанах хатĕрлесе хумалла, вĕсене пăхма чи лайăх та опытлă работниксене уйăрса лартмалла. Колхозсенче ама выльăхсене пăрулаттармалли çуртсем тăвассине яланхи йĕркене кĕртес пулать. çамрăк выльăхсене хупма ăшă та çутă çуртйĕрсем тăвас пулать. Çамрăк выльăхсемшĕн тăрăшни вăл — фермăн малашлăхĕшĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн ыранхи кунĕшĕн тăрăшни пулса тăрать.

Выльăхсене витере хупса усрас хĕллехи тапхăр пуçланчĕ. Халĕ вырăнти советпа парти органĕсен руководителĕсем выльăх-фермисен ĕçне уйрăмах тимлĕн хутшăнса пыни, колхозсенчи кадрсене çак ĕçре куллен пулăшу парса тăни кирлĕ. Хĕллехи вăхăтра выльăх-чĕрлĕх йышне пĕтĕмĕшпех упраса хăварас пулать, вĕсен тухăçлăхне чакма парас пулмасть.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен кадрсене суйласа илсе ĕçе вырнаçтарса тухас тата вĕсене воспитани парас ĕçсем çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Малта пыракан колхозсенче выльăх-чĕрлĕхе пăхакан кадрсене вырăнтан вырăна куçармаççĕ, çакă вара выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла аталантарса пыма вăйлăн пулăшать. Пачах та урăхла, çак ĕçре кадрсем улшăнса тăни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе япăхтарса ярать, тепĕр чухне пысăк сиенсем те кўрет. Анчах пирĕн уйрăм колхозсен руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх пăхакансен кадрĕсене çирĕплетес, вĕсене воспитани парса пырас тĕлĕшпе пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Кадрсем улшăнса тăнине пирĕн епле пулсан та пĕтермелле.

Хĕллехи вăхăтра ферма работникĕсен, уйрăмах вăрçă вăхăтĕнче ĕçе тăнă çĕнĕ работниксен квалификацине ўстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле. Районсенчи çĕрĕç органĕсен пĕр-пĕр колхозри чи лайăх фермăра кўршĕри колхозсен фермисенче ĕçлекенсем валли курссем организацилемелле. Çакă вăл питĕ усăллă ĕç, мĕншĕн тесен çав курссенче зоотехниксемпе тата ытти специалистсемпе пĕрлех, курсантсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн мастерĕсем вĕрентеççĕ. Курссене лайăх фермăсем çумĕнче организацилени практикăри опыта тĕплĕн пăхса вĕренме пулăшать. Кадрсене вĕрентнĕ чухне ама выльăхсемпе çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ўстерес ыйтусем çине тимлĕн çавăрăнса пăхни кирлĕ.

Çак мероприятисене пурнăçа кĕртни, паллах, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе лайăхлатма, çав ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме май парать.

Районсен руководителĕсене уйрăмах лашасене упраса хăварас тата вĕсемпе усă курас ыйту çине тимлĕн çавăрăнса пăхма сĕнес килет.

Вăрçă вăхăтĕнче лашасене ĕç йывăр килчĕ. Çакăнпа пĕрлех чылай çĕрте лашасене япăх пăха пуçларĕç. Çавна пула ĕнтĕ республикăри районсенче лашасем сахал мар вилчĕç. Кун пекки пирĕн республикăра халиччен нихăçан та пулман. Уйрăмăнах лашасем Шăмăршă, Красноармейски, Пăрачкав, Тăвай тата Чкаловски районсенче нумай вилчĕç.

Республика Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ уйрăм колхозсемпе районсенче лашасене тўсме çук начар пăхнине пĕр хутчен мар кăтартса панă. Чылай колхозсенче лашасене пăхас ĕçри обезличкăна халĕ те пĕтермен, уйрăмах кĕсресене киревсĕр тыткалаççĕ, ку тĕлĕшпе зоотехника правилисене пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Çаксем пурте вĕсем пирĕн колхозсенче лашасен йышне чакарасси патне илсе пыраççĕ. Хăшпĕр колхозсенче лашасем çухалаççĕ, вĕсене кашкăрсем ватаççĕ. Уйрăм колхозсем районри çĕрĕç пайĕпе килĕштермесĕрех колхоз лашисене сутса янисем те пулнă. Çакă вăл пуринчен ытла лашасем ĕрчетес ĕçре зоотехниксемпе ветеринарсене е çĕрĕç работникĕсене кăна шанса панинчен килнĕ, райисполкомсен председателĕсемпе парти райкомĕсен секретарĕсем хăйсем вара ку енĕпе сахал ĕçлеççĕ.

Лашасем ĕрчетес ĕçе лайăхлатас тесен, пирĕн мĕн тумалла-ха?.

Лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçри обезличкăна татăклăнах пĕтермелле, лашасене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетмелле, вĕсене чăн-чăн хуçа пулса пăхмалла, тĕрĕс ĕçлеттермелле, конюхсем пулса ĕçлеме тўрĕ кăмăллă та колхоз хуçалăхĕшĕн тăрăшакан çынсене уйăрса лартмалла, вĕсене ĕçре хавхалантарса пымалла, чи лайăх конюхсен опычĕпе ытти мĕнпур конюхсене паллаштармалла, лашасем хушшинчи чир-чĕрсене пуçĕпех пĕтермелле.

Лаша вилни е кĕсре хăм пăрахни çинчен калакан кашни факта райисполкомсемпе парти райкомĕсен ларăвĕсенче, çавăн пекех колхозниксен пĕрлешўллĕ пухăвĕсенче сўтсе-явас пулать, çав ĕçшĕн айăплисене вăхăтра ответ тыттарас пулать.

Пирĕн пĕлтĕр тата кăçалхи çуркунне апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен хăшпĕр йывăрлăхсем пулчĕç пулсан, кăçал вара апат-çимĕç çителĕксĕр тесе ўпкелешме пĕр сăлтав та çук. Кунта выльăх апачĕпе тĕрĕс усă курни, ăна типтерлĕн те перекетлĕн тыткалани кăна кирлĕ.

Лашасен ĕçне çăмăллатас тесен, пирĕн мăйракаллă шултăра выльăхсене ялхуçалăх ĕçĕсенче ĕçлеме вĕрентмелле. Уйрăм колхозсенче ĕнесемпе тата вăкăрсемпе ĕçре анлăн усă кураççĕ, анчах çак ĕç нумай колхозсенче вăрахăн пурнăçа кĕрсе пырать. Кунта чи малтан районсен руководителĕсем — райисполком председателĕсемпе парти райкомĕсен секретарĕсем хăйсем айăплă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк çитменлĕхсене пирĕн халех пĕтермелле, выльăхсен йышĕпе вĕсен тухăçлăхне ўстерессишĕн тăван çĕршывпа фронт хушнă пек ĕçлемелле.

А. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПАРТИПЕ СОВЕТĂН РАЙОНРИ АКТИВĔН ВĔРЕНĔВĔ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Кадрсене марксизм-ленинизм теорипе хĕçпăшаллантарни, вĕсене çав теорие вĕренсе алла илме куллен пулăшса пыни хамăрăн мĕнпур вăйсемпе майсене тăшмана çĕнтермешкĕн мобилизацилеме май парать. Çакна шута илсе, партипе советăн районри активĕ марксизм-ленинизм теорине тимлĕн вĕренме пуçларĕ. Вĕренĕве 64 çын хутшăннă. Вĕсенчен нумайĕшĕ районри партипе совет организацийĕсен руководителĕсем. Занятисем ВКП(б) райкомĕн парти кабинетĕнче пулса иртеççĕ. Октябрĕн 6-мĕшĕнче вĕренĕве çўрекен юлташсем валли ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ Мурзаев юлташ В. И. Ленинăн «Что такое «друзья народа» и как они воюют против социал-демократов» произведенийĕ çинчен лекци вуласа пачĕ. Çав кунах вĕренĕве хутшăннă юлташсен иккĕмĕш группи валли ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ Тюмерова юлташ ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн пĕрремĕш глави тăрăх калаçу ирттерчĕ.

Кун хыççăн вĕренĕве çўрекен юлташсем В. И. Ленинăн çўлте асăннă произведенине тата ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн 1-мĕш главине хăйсем тĕплĕн вĕренсе конспектсем хатĕрленĕ. Октябрĕн 16-мĕшĕнче вара семинар пулса иртрĕ.

Семинарта вĕреннĕ темăсем тăрăх калаçнă чухне вĕренме çўрекенсенчен чылайĕшĕ марксизм-ленинизм теорине тĕплĕн вĕренме тăрăшни палăрчĕ. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Тимофеев юлташ, Октябрьскинчи вăтам шкулăн директорĕ Вишневский юлташ В. И. Ленинăн «Что такое «друзя народа» и как они воюют против социал-демократов» произведенине тĕплĕн пĕлнине кăтартрĕç, семинара активлăн хутшăнчĕç.

Калас пулать, малтанхи семинарта уйрăм юлташсем çителĕксĕр хатĕрленни, вĕреннĕ темăсем тăрăх конспектсем çырманни курăнчĕ. Çак çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе, марксизм-ленинизм теорине тĕплĕн вĕренессишĕн çине тăрса ĕçлемелле.

Г. МАЙОРКИН
ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

Комсомол организацин отчетпа суйлав пухăвĕ

ÇĔРПЎ. Çак кунсенче комсомолăн педагогика училищинчи организацин отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Кун йĕркинчи ыйту тăрăх комсомолецсем организаци ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критиклерĕç. Педагогика училищинче комсомол организаци яланах лайăх ĕçлесе пынă. Унта, 50—75 комсомолецран кая пулман. Вĕсем вĕренў пахалăхне ўстерес тата дисциплинăна çирĕплетес çĕрте ыттисемшĕн примерлă пулнă, училище дирекцине пысăк пулăшу парса тăнă.

Çапла ĕçленĕ кунти комсомолецсем пĕр çулталăк каялла. Анчах хальхи вăхăтра кунти комсомол организацийĕ хăйĕн ĕçне пĕтĕмпех сўрĕклетсе янă. Организацин вăхăтлăх секретарĕ тунă списокра пурĕ те 17 комсомолец кăна тăрса юлнă. Вĕсенчен чылайĕшĕ 2—3 уйăх хушши член укçи тўлемен. Вĕренў çулĕ пуçланнăранпа та кунта комсомол пухăвне ирттермен. Педучилищĕре вĕренекен темиçе çĕр çамрăк хушшинче комсомол йышĕ ўсменни вăл— çамрăксем хушшинче пачах та ĕçлеменнине пĕлтерет.

Пуху комсомол комитечĕн çĕнĕ составне суйларĕ. Çĕнĕ состава ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеме хушса хăварчĕ.

П. ТЕРЕНТЬЕВ.

Черчилльпе Иден Парижа пыраççĕ

ПАРИЖ, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви правительствăн пĕлтерĕвне парать. Çав пĕлтерўре çапла каланă: Франци правительстви Великобритани премьер-министрне Уинстон Черичче тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Антони Идена Парижа килме чĕнчĕ. Черчилльпе Иден Парижа çывăх вăхăтрах килеççĕ, тенĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 3-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă:

Вальхерен утравĕ çинче союзниксем çаплах малалла куçса пыраççĕ. Хĕвеланăç Капеллерен малалла наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсем Домбург хулинчен иртсе кайнă. Ытти чаçсем Флиссенген хулинчен икĕ мильăра тăракан пункта çитнĕ. Флиссенген хулинче, çавăн пекех тата Вальхерен утравĕ çинчи дамбăн хĕвеланăç вĕçĕнче хаяр çапăçусем пынă.

Леопольд каналĕнчен хĕвелтухăçнерехре тăшман хирĕç тăма пăрахнă. Зеебрюгг хулинче кăна тăшман хирĕç тăракан вырăнсене пĕтерсе пыраççĕ.

Мейель хули районĕнче союзниксен çарĕсем малалла куçса пынă, вĕсем хулана пырса кĕресси халь мĕн пурĕ те 2.000 ярд кăна тăрса юлнă. Гюртген секторĕнче кĕрешекен союзниксен чаçĕсем артиллери хаяррăн персе хатĕрленĕ хыççăн 2.500 ярд малалла кайнă. Гюртген хулинчен 1 миля кăнтăртарахра ларакан Фоссанак хулине йышăннă. Тăшман хирĕç тăни вăйланса пырать пулин те, союзниксем çапла наступлени туса пыраççĕ.

Ноябрĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле 1.000 самолет ытла Хĕвеланăç Германие тапăннă. Дюссельдорф хули çине бомбăсем пуринчен ытларах пăрахнă. Çăмăл бомбардировщиксем Оснабрюк хулине атакăланă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 3-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă: Грецире Флорина хули районĕнче ноябрĕн 2-мĕшĕнче союзниксен патрулĕсем тăшман колоннисен хыçалти чаçĕсене тапăннă. Нимĕçсене çухатусем кўнĕ. Çав районра союзниксен патрулĕсем тăшманăн 60 вагонран тăракан эшелонне ўпĕнтерсе янă.

Çанталăк начар тăнă пирки ноябрĕн 2-мĕшĕнче Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕн самолечĕсен пысăк пайĕ çапăçăва хутшăнман.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ ноябрĕн 3-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çапла каланă: виçĕ кун хушши çапăçнă хыççăн Югослави чаçĕсем Адриатика тинĕсĕ хĕрринчи Задар хулипе пысăк порта ирĕке кăларнă. Задар хулинчи халăх хăйсене ирĕке кăларакансене питĕ хавасланса кĕтсе илнĕ. Шибеник-Книн Косово секторĕнче çавăрса илнĕ тăшман вăйĕсене пĕтерсе тăкассишĕн ăнăçлăн çапăçаççĕ.

Герцоговинăра Мостар Невесине секторĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Югославсен чаçĕсем нимĕçсен кăнтăр еннелле тунă темиçе контратакăна сирсе янă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра официальнă çапла пĕлтернĕ: октябрь уйăхĕнче 8-мĕш авиаци корпусĕн самолечĕсем (акăлчансемпе американецсен самолечĕсем) Германири объектсем çине 100 пин тоннăна яхăн бомба пăрахнă. Америкăн 8-мĕш авиаци корпусĕнче тăракан «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши самолетсем фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем 40.000 тоннăна яхăн пăрахнă. Американ Европăри стратегиллĕ сывлăш-çар вăйĕсен самолечĕсем нефть тасатакан заводсем çине, чугун çул станцийĕсем çине, кĕперсем çине тата промышленность предприятийĕсем çине 56.700 тоннăна яхăн фугаслă бомбăсем пăрахнă.

АФИ АГЕНТСТВИ АНДРЭ МАЛЬРО ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: французсен паллă писателĕ Андрэ Мальро виçĕ департаментра — Ло, Коррез тата Дордонь департаменчĕсенче — партизансене ертсе пынă; çав департаментсенче нимĕç оккупацийĕнчен тарнă Эльзаспа Лотаринги çыннисем пытанса пурăннă. Хальхи вăхăтра Мальро Эльзаспа Лотарингин сентябрь пĕтеспе Вогез тăвĕсем патне пынă бригадин полковникĕ пулса тăрать. Çав бригада унта Францие ирĕке кăларассишĕн çапăçса кайнă.

ФРАНЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ПАТРИОТЛА МИЛИЦИЕ ХĔÇПĂШАЛСĂРЛАНТАРМА ЙЫШĂННИ ÇИНЧЕН ПАРИЖРИ ХАÇАТСЕМ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ПАРИЖ, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Франци правительстви патриотла милицие хĕçпăшалсăрлантарма йышăннă. Парижри хаçатсем çавăн пирки халь статьясем пичетлесе кăларнă.

«Резистанс» хаçат çапла çырать: Францире фашистла хăрушлăх пĕтмен-ха, çавăнпа та правительство патриотла милицие хĕçпăшалсăрлантарма йышăнни вăхăтсăр ĕç пулса тăрать.

«Фронт насионал» хаçат çапла çырать: «Пурте çакна пĕлсе тăраççĕ: мĕнпур министерствăсенче Виши лартнă ытла та йышлă çынсем, Лавале парăнса ĕçлекенскерсем ертсе пыракан вырăнсенче ларасçĕ-ха. Çав çынсем унта ларнă вăхăтра Францие ура çине тăратас ĕçе кансĕрлеççех».

Хаçат çакна палăртать: демократиллĕ учрежденисем халĕ те хăрушлăх умĕнче тăраççĕ-ха. Çавăнпа та патриотсен сыхтăмалла, вĕсен хĕçпăшал пулмалла. Французсен шалти хĕçпăшаллă вăйĕсем ултă эрне хушшинче 500 пин салтака вĕрентсе хатĕрлеме пултараççĕ.

ТУЛУЗĂРА «ИСПАНЕЦСЕН НАЦИ СОЮЗĔН» КОНГРЕСĔ УÇАЛНА

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 2-мĕшĕнче Тулуза хулинче «испанецсен наци союзĕн» конгресĕ уçăлнă. Конгреса 400 делегата яхăн пынă, вĕсем Испанири тĕрлĕ политикăллă партисен представителĕсем пулса тăраççĕ.

Делегатсем пурте Испание ирĕке кăларассишĕн Франкопа фашистла фалангăна хирĕç кĕрешмешкĕн мĕнпур испанецсене пĕрлештерме кирли çинчен каланă.

МАУРИ РЮЭМЯ КАЛАНИ

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 29-мĕшĕнче Стокгольма Финляндирен финсен общество ĕçĕсене тăвакан паллă çынни Маури Рюэмя пынă. Ана нумаях пулмасть тĕрмерен кăларнă, унта вăл виçĕ çул ларнă. «Дагенс нюхетер» хаçатăн сотрудникĕпе калаçнă чухне Рюэмя çапла каланă:

«Финляндире демократи çинчен калаçасçĕ çеç-ха. Халăх демократиллĕ правăсем туяниччен нумай ĕçлемелле пулать-ха. Фини рабочийĕсем хальхи вăхăтра пулас пурнăç çине шанса пăхаççĕ. Вĕсем питĕ хавхаланнă. Анлă массăсем Таннера пулăшманпа пĕрех. Коммунистсен партийĕ чи малтан демократиллĕ партисемпе çыхăнса ĕçлесшĕн. Сейма январь пуçламăшĕнче суйлаççĕ пулмалла. «Финлянди — Совет Союзĕ» ятлă çĕнĕ общество халăхăн тĕрлĕ сийĕсен представителĕсен анлă фрончĕ çине таянса тăрать. Çав обществăна темиçе пин çын члена кĕрет. Пĕтĕм çĕршывĕпех çав обществăн отделенийĕсене уçаççĕ. Çĕнĕ общество «Кансан Саномат» ятлă хаçат кăларма пуçлать. «Финлянди—Совет Союзĕ» ятлă обществăна ертсе пыракансем хушшинче шведсен халăх партийĕн руководителĕсенчен пĕри магистр Тернгрен пур, çавăн пекех тата промышленник Макс Сергериус тата Финляндире экономика тĕлĕшпе ĕçлекенсен хăшпĕр представителĕсем пур, çав шутрах суту-илў советникĕ. Харима, директор Нюстен тата ыттисем те. Халăх Финляндие çак телейсĕр вăрçа хутшăнтарнă çынсене — Таннера, Рютине тата ыттисене те ответ тыттарма хушать. Халлĕхе сахал тунă-ха. Хисеплĕ председатель Паасикиви ертсе пыракан общество Российăпа туслă çыхăну тытма пуçлас ĕçре пысăк вырăн йышăнĕ, тесе шутлаççĕ».

Тĕнчери лару-тăру

Аслă Октябрь праçникĕ çывхарса килет. Хĕрлĕ Çар, тăшмана хыçранах хăваласа пырса, çĕнтерў хыççăн çĕнтерў туса пырать. Вăл тăшмана хăйĕн çĕрĕ çинче аркатать. Фашистла захватчиксене хамăр тăван çĕршывран хăваласа кăларнă хыççăн совет çарĕсем халь ытти халăхсене ирĕке кăларса пыраççĕ.

Пирĕн союзниксен çарĕсем те Хĕвеланăçĕнчен тăшмана вăйлăрах та вăйлăрах пырса çапаççĕ. Голланди çыранĕ çине десантсем антарнă. Союзниксем Маас шывĕ хĕрринчи плацдармсене аслăлатса пыраççĕ. Союзниксен çарĕсем Франципе Германи чиккиё патĕнче малалла куçса пыраççĕ.

Фашистла Германие темиçе пин бомбардировщик пыра-пыра çапать. Ăна ирĕклĕхе юратакан халăхсен çарĕсем тимĕр кăшăлпа кăшăлланă пек хĕстерсе лартнă. Унăн шанчăкĕсем пĕтнĕçемĕн пĕтсе пыраççĕ. Вăл пĕтсе ларас кун çывăхарнăçемĕн çывăхарса килет.

* * *

Гитлерăн паллă генерал-лейтенанчĕ Дитмар çак кунсенче тĕнчери лару-тăру çинчен радиопа сăмах тухса каланă. Вăл «вăрçă пирки хăйĕн шухăшĕсене» каллех улăштарма шут тытнă. Вăл, хăй каланă тăрăх, вăрçă çинчен калакан нумай ăнлавсене тепĕр хут улăштарма, вĕсене сарма» кирлине туйса илнĕ. Кунсăр пуçне, ăна çĕнĕ терминсем кирлĕ пулса тăнă, мĕншĕн тесен кивĕ терминсем ăна халĕ канăçтармасçĕ иккен, Клаузевиц, Мольтке тата Шлиффен вăрçă çинчен калани те ăна халь кăмăла каймасть.

Çав радиогенерал нимĕç авторитечĕсене хирĕç «çав тери чăрсăр» тухса каланине çăмăл ăнланма пулать. Дитмар хальхи лару-тăру вăхăтĕнче «çĕнтерў» тата «поражени» текĕ ăнлавсене пĕр-пĕринчен лайăх уйăрса илме çук тесе шутлать. Ĕлĕкрех пурне те ăнланса илме çăмăлччĕ, халĕ ăнланма çăмăл мар, тет генерал.

Гитлерла вăрă-хурахсен жуликла мелĕсемпе усă курса. Дитмар нушана ырă ĕç пек кăтартма тăрăшать. Германин çак вăрçăри «питĕ хуйхăллă опычĕ» çине кăтартса, вăл çапла калать: çĕнтерни вăрçăра çиеле тухнине пĕлтермест-ха, тет.

Вăрçăра Германи çиеле тухма пултарайманнине йышăнса, Дитмар генерал нимĕç халăхне Германи нумай вăхăт хушши çапăçма пултарнине ĕнентерме хăтланать. Çак ĕçе тума вăл çĕнĕ терминсем шырать те. Çав терминсене вăл Геббельсăн юлашки вăхăтра пичетленĕ статьинчен илет. Ĕç çапла тăрать иккен: Германи ĕлĕкрех «экстенсивнăй» вăрçă туса пынă пулать, халĕ вăл «интенсивнăй» вăрçă туса пырать иккен. Ĕлĕкрех Германи, пысăк территорисем тытса илнĕ пирки, хăйĕн сыхăнăвĕсене ытла та тăсса янă. Çакă вăл — «экстенсивнăй» вăрçă пулнă пулать. Дитмар каланă тăрăх, çавăн пек вăрçă Германие питĕ йывăра килнĕ, çавăнпа та вăл «интенсивнăй» вăрçă вăрçма пуçланă. Çак вăрçă вара ăна хăйĕн вăйĕсене нумай пĕчĕкрех лаптăк çинче вырнаçтарма май парать пулать.

Дитмар темле аппалансан та темле терминсем каласан та, вăл чăннипе ĕç мĕнле пынине пытарма пултараймасть. Дитмар ахальтен мар ĕнтĕ Клаузевиц, Мольтке, Шлиффен авторитечĕсене чĕрсе пăрахнă, тĕрĕссипе вăл Гитлер авторитетне те чĕрсе пăрахнă, мĕншĕн тесен шăп çав Гитлер ĕнтĕ, радиогенерал сăмахĕсемпе калас пулсан, «экстенсивнăй» вăрçă пуçласа янă. Çав вăрçă путланса ларчĕ, ăна Дитмар пытармасть. Анчах та вăл пĕр пысăк та питĕ паха япала çинчен каламасть: «экстенсивнăй» вăрçă гитлерла Германие калама çук хакла ларчĕ. Унăн темиçе миллион салтак, чи лайăх çарĕсем тата çар техники çав тери нумай пĕтрĕç. Çар производстви хăйĕн задачисене пурнăçласа пыраймасть, вăл союзлă çĕршывсен производствинчен нумай кая юлса пырать. Гитлерăн çар машинине ытла та пысăк сиен кўнĕ, ăна ĕнтĕ нимĕнпе саплама çук. «Интенсивнăй» вăрçа та, хăйĕн çĕрĕ çинчи вăрçа, вăл ĕçсем лайăх пынипе мар, фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкне хăваласа кĕртнĕ пирки туса пырать.

Дитмар хăйне те, нимĕçсене те гитлерла Германин хăйĕн шăтăкне хўтĕлеме вăйпа ресурссем çитеççĕ, тесе ĕнентерме тăрăшать. Нимĕçсем «экстенсивнăй» вăрçăра аяла пулнă пекех, «интенсивнăй» вăрçăра та аяла пуласси çывăх вăхăтрах лайăх курăнĕ.

* * *

Октябрĕн 26—28-мĕшĕсенче Мускавра Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен правительствисен представителĕсем Болгари правительствин представителĕсемпе калаçнă. Калаçусем перемири пирки Килĕшў çырса алă пуснипе вĕçленнĕ.

Совет халăхĕ çав Килĕшĕве кăмăллать. Çав Килĕшў вăл Балканра гитлерла Германие вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен çĕнтернине пĕлтерет. Халĕ Германи Балкана кĕрсе каяссине пĕтерсе лартнă ĕнтĕ.

Германи унта темиçе çул хушши халăхсене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе, пĕр-пĕрин юнне юхтарттарса пурăннă. Халĕ Болгари ĕлĕкхи политикăна пăрахрĕ, гитлерла Германипе тытса пынă çыхăнăва татрĕ, урăх çул çине тухрĕ. Çав çулпа пырса, вăл каллех никама пăхăнман ирĕклĕ çĕршыв пулса тăма пултарать. ирĕклĕхе юратакан халăхсем хушшинче тивĕçлĕ вырăн йышăнма пултарать.

Союзниксем тăратнă перемири условийĕсене Болгари хаçачĕсемпе халăхĕ тетĕрĕслĕхлĕ тата йывăр мар условисем тесе шутлаççĕ. «Отечественнăй фронт» ятлă хаçат Килĕшўре «Болгарие тавăрас шухăш пĕртте çуккине» палăртать. Вăраха пыракан тĕрĕслĕхлĕ мир тăвас тесен, Болгарин çав перемири условийĕсене тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымалла, тет.

Болгарипе тунă перемири, çавăн пекех тата Румынипе тунă перемири Балканри «çĕнĕ йĕркене» пĕтерсе лартаççĕ. Йăлтах урăхла йĕрке туса хураççĕ. Çав йĕрке Балканри халăхсене пĕр-пĕринпе чăннипе туслăн пурăнма пуçлама тата пĕрлехи тăшмана çĕнтерессине çывăхартма май парать.

Болгарипе тунă Килĕшў Совет Союзĕпе Болгари хушшинчи туслă çыхăнусене малалла аталантарса пыма никĕс хывать. Çав вăхăтрах вăл аслă союзлă çĕршывсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленине, çав çĕршывсем гитлерла Германие аркатса тăкас шухăшпа пĕр минутлăха та пăрахманнине тата вăрçă пынă хушăрах вĕсем малашне вăраха пыракан çирĕп мир туса хумашкăн кирлĕ условисем тума пултарнине кăтартса парать. Болгарипе тунă Килĕшў аслă союзниксем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес ĕçе, çавăн пекех тата çав аслă союзниксемпе пĕчĕк çĕршывсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес ĕçе çĕнĕрен пулăшни пулса тăрать.

* * *

Лăпкă океан çинчи вăрçă вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Юлашки вăхăтра унта пысăк ĕçсем пулса иртнĕ. Çав ĕçсене çителĕксĕр хак пама юрамасть. Лăпкă океан çинчи вăрçăн характерне Филиппин утравĕсем патĕнче пулса иртнĕ вăйлă çапăçу лайăх кăтартса парать. Унта Америка флочĕпе Япони флочĕн тĕп вăйĕсем, тĕрĕссипе илсе каласан, пĕр-пĕринпе пĕрремĕш хут çапăçнă.

Америка командованийĕ Лăпкă океан çинче наступлени туса пыракан районра сарăлса пынă. Филиппин утравĕсем çине Америка çарĕсене антарни çав наступлени мĕн тери вăйланса кайнине кăтартать. Филиппин утравĕсемшĕн çапăçни Инçетри Хĕвелтухăçĕнче вăрçă пуçланнăранпа пулса иртнĕ çапăçусенчен чи вăйли пулса тăрать пулмалла. Çав ĕçсем мĕн тери паха пулни çинчен калама та кирлĕ мар пуль. Японецсем, халиччен тинĕсре вăйлă çапăçусем туса ирттерессинчен пăрăнса пынăскерсем, хăйсен ĕлĕкхи тактикине пăрахса, хăйсен флочĕн тĕп вăйĕсене халь çапăçусене кĕртсе янă.

Американецсем çав утравсем çине октябрĕн 18—20-мĕшĕсенче аннă. Америка çарĕсем Лейте тата Самар утравĕсем çине пырса аннă та японецсен çав утравсем çинчи вăйĕсене питĕ пысăк поражени тўстернĕ.

Япони командованийĕ Америкăн Филиппин утравĕсен районĕнче пухса тăратнă карапĕсене пĕтерсе тăкма тата çав вăхăтрах унăн авианосецсем çинчи авиацине пырса çапма шут тытнă курăнать. Çак ĕçе тума японецсем Филиппин утравĕсем патне хăйсен флочĕн виçĕ ушкăнне илсе пырса тăратнă. Çав ушкăнсенчен иккĕшĕн Америка вăйĕсене Лейте тата Самар районĕнче пырса çапмалла пулнă, виççĕмĕш ушкăнĕн, Америка флочĕн тĕп вăйĕсене хăйĕнпе çапăçтарса, çав малта кăтартнă операцие пурнăçлама пулăшмалла пулнă.

Япони командованийĕ çав задачăсенчен пĕрне те пурнăçа кĕртеймен. Япони флочĕн виçĕ ушкăнĕ те, пысăк çухатусем тўссе, каялла чакнă. Американецсем каланă тăрăх, Япони флочĕн 58 карапĕ, çав шутра 2 линкорĕ, 4 авианосецĕ, 6 йывăр крейсерĕ тата ыттисем те шыва путнă е сиенленнĕ. Американецсен «Принстон» ятлă авианосецĕ, хуралласа пыракан 2 авианосецĕ, 3 эсминецĕ тата темиçе пĕчĕкрех карапĕсем пĕтнĕ.

Хальхи вăхăтра Америка çарĕсем Филиппин утравĕсем çинче малалла çапăçаççĕ.

Я. ВИКТОРОВ.

НИМĔÇ САЛТАКĔСЕМ ВĂРÇА РАЙОНĔСЕНЧЕН КУÇСА КАЙНА ÇЫНСЕН ЛАГЕРĔСЕНЧЕ ПЫТАНСА ПУРАНАÇÇĔ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче вăрçă районĕсенчен куçса кайнă çынсен Каухава хулинчи лагерьне тĕрĕсленĕ чухне Союзниксен Финляндири Контроль Комиссийĕн сотрудникĕсем çак лагерьте нимĕçсен çарĕнче пулнă 16 салтака тупнă; çав салтаксем вĕсем унта вăрçă районĕсенчен куçса пынă çынсемпе пĕрле пурăннă. Вĕсем хулара тата унта таврашĕнче ăçта кайас тенĕ çавăнта кайма пултарнă, вĕсене никам та хуралламан. Союзниксен Контроль Комиссийĕн представителĕсем хушнипе çав салтаксене пурне те халь тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсен лагерьне янă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăвашпромстрахкассăна илан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: çар çыннисен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор, оргинспектор, шанчă врач тата ĕç сыхлавĕн инспекторĕ. Врачăн ĕçукçи — 800 тенкĕ. Ĕç сыхлавĕн инспекторне кайран хăйĕн квалификацине хăпартма Мускава курса ярĕç. Ĕçлеме илнисене хваттер парĕç. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Калинина, 51, первый этаж.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5. Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 10.000 экз.

НГ 00779.